# Куравра – Муркаш пуканисем

Республикăри Халăх пултарулăхĕн çуртĕнче «6х7» галерейăра Муркаш тăрăхĕнчи ал ĕç ăстисен куравĕ уçăлнă.

Экспозицире – Муркаш шкулĕнче 8-мĕш класра вĕренекен Анастасия Васильевăпа унăн амăшĕн Людмила Вячеславовнăн пуканисем. Анастасия республика шайĕнчи конкурссене маларах та хутшăннă. Кăçал «Искусство – ачасен аллипе» выставкăра та хăйĕн пултарулăхĕпе паллаштарнă. «Пир-авăр тетте» номинацире II степень диплома тивĕçнĕ. Пуканесене вăл пластикран те ăсталать. Хĕрĕн пултарулăхне кура амăшĕ те пуканепе кăсăкланма пуçлать. Васильевсем асăннă выставкăна 5 пукане тăратнă.

Алена Малясова вара çакнашкал курава пуçласа хутшăнать. Унăн вĕтĕ шăрçапа тĕрленĕ картинисем питĕ илемлĕ.

Кунтах – Людмила Родионовăпа Александра Скворцова хурăн хуппипе улăмран тунă панно, Светлана Рожковăн чĕнтĕрĕсем. Курав чӳк уйăхĕн 17-мĕшĕччен ĕçлĕ.

Р.РОЗОВА.